Учитель Феодор Тимофеев.

# ҶӐВАШЛА ТӖРӖС ҪЫРМАЛЛИ ПӐРАВӖЛӐСЕМ.

Издание „КАНАШ“.

КАЗАНЬ
Типо-литография Казанского Университета
1919.

# Ҫăвашла тĕрĕс ҫырмалли пăравĕлăсем*).

Епĕ ҫырнă „Ҫăвашла тĕрĕс ҫырма вĕренмелли кĕнекене“ типографине ҫаптарма пани сакăр уйăх иртрĕ; ҫапах та вăл кĕнекене хăҫан ҫаптарса пĕтерессине халĕ те епĕ пĕлместĕп. Ҫавăнпа епĕ ҫак пăравĕлăсене те пулин кăларас терĕм. Ҫак пăравĕлăсене пурне те епĕ „Ҫăвашла тĕрĕс ҫырма вĕренмелли кĕнекерен“ тата „Фонетика и правописание чувашского языка“ йатлă кĕнекерен—Н. И. Ашмарин

*) Ку статйана 7-мĕш пункт таран „Канашăн“ 52-мĕш №-ҫе ҫапнăҫҫĕ. Анҫах Хусана ҫехсем килнĕ пирки, ăна ҫапса пĕтереймĕрĕмĕр. Ҫавăнпа ăна халĕ пĕтĕмпех ҫапатпăр. Ред.

пăхса тухнă хыççăн тин типографине çаптарма панă кĕнекесенчен çырса илтĕм. Епĕ 17 пăравĕлă турăм. Вĕсенчен хăшĕсене пĕрлештерсе пĕр пăравĕлă тума пулат. хăш-хăш пăравĕлăран ик-виç пăравĕлă та тума пулат. Çапла тусан пăравĕлăсем 17-рен сахал та, ытла та пулма пултараççĕ. Чи кирлĕ пăравĕлăсем 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕ, унтан 3-мĕшĕпе 9-мĕшĕ. Чи йывăррисем 9-мĕшĕпе 13-мĕшĕ.

## I. Сăмахсене çырмалли пăравĕлăсем.

1. Çемçе сăмахра, çемçе сыпăкра „ť, ľ, ң“ çырмаççĕ, „т, л, н“ çыраççĕ: кин, пит, тинĕс, тилĕ, тенкĕ, илнĕ, илтнĕ, пукане, путене, калĕ, кунĕ, сăнĕ.

Ăнлантарни. Чăваш çырăвĕнче 25 сас-палли. А, у, ы, ă, е, у, и, ĕ“ сасăсене калана чух çăвар уçăлса тăрат; вĕсене тата йурлама та, уççăн калама та пулат; çавăнпа вĕсене „уçă сасăсем“, теççĕ. „Н, р, ш, в, л, м, с, х, п, т, ť, к, ч, ç, ң, ľ, й“ сасăсене калана

ҫух ҫăвар хупăнарах тăрат; ҫавăнпа вĕсене „х у п ă  с а с ă с е м“, теҫҫ. „А, у, ы, ă“ сасăсем хытă илтĕнеҫҫĕ; вĕсене „х ы т ă  у ҫ ă  с а с ă с е м“, теҫҫĕ. „Е, ӳ, и, ĕ“ сасăсем ҫемҫен илтĕнеҫҫĕ; вĕсене „ҫ е м ҫ е  у ҫ ă  с а с ă с е м“, теҫҫĕ. Сăмахра пĕр уҫă саса хытти пулсассăн, ытти уҫă сасăсем те хыттисем пулаҫҫĕ, пур хупă сасăсем те вара хыттăн илтĕнеҫҫĕ: тăмана, тылă, паракан, вăрлăх, тăм, кул. Сăмахра пĕр уҫă сасă ҫемҫи пулсассăн, ытти уҫă сасăсем те ҫемҫисем пулаҫҫĕ, хупă сасăсем те ҫемҫенĕн илтĕнеҫҫĕ: тинĕс, ҫӳреҫе, илтнĕ, пиллĕх, пиллĕк, пин, пит. Хытă сасăллă сăмаха „х ы т ă  с ă м а х“, теҫҫĕ, ҫемсе сасăллине—„ҫ е м ҫ е  с ă м а х“, теҫҫĕ.

2. „Ť, љ, ң“ сас-паллисене хытă сыпăкра кăна ҫыраҫҫĕ: аťа, ťыха, калаť, тураť, тытаť, ахаљ, кукăљ, мăкăң, хуңăм, Ваңук, Наťуш. Љава, Иљуш, Миťук.

Х у ш с а  к а л а н и. 5-мĕш правилă тăрăх, хытă сăмахра та „љ, ң“ йаланах ҫырмаҫҫĕ.

3. Хытă сăмахсем „е, ӳ, ĕ“ сасăсемпе пĕтеҫҫĕ пулсан, ҫав сасă-

сем умĕн „т, л, н“ çырмалла: анне, аннӳ, катмĕ, кулмĕ, пулмĕ, тупмĕ, кулђĕ, пулђĕ.

Ӑнлантарни. Ђăваш ђĕлхинђе хытă сăмах вĕçĕнђи „мĕ, тĕ, те, ђĕ, пӳ“ пек çемçе сыпăксем хăйсен умĕнђи хупă сасăсене çемçетеççĕ.

4. Хытă сăмахра „ť, ђ, ç“ умĕн „љ, њ“ çырмаççĕ, „л, н“ çыраççĕ: пăнђă, калђа, шанђăк, кăнђалʻв пулђђăр, шанђђăр, панťа, хăнťă, шалçа, шулçă, пылђăк.

Ӑнлантарни. „Ť, ç, ђ“ çемçе хупă сасăсем. Вĕсен умĕн „л, н“ сасăсем йаланах çемçенĕн илтĕнеççĕ.

5. Хытă сăмахра „ť, ђ, ç“ хыççăн „и“ çырмаççĕ, „ы“ çыраççĕ: арçын, çырла, çыру, çыпçăн, ťыха, ђышкă.

Ӑнлантарни. „Ť, ђ, ç“— çемçе хупă сасăсем. Вĕсен хыççăн „ы“ çемçелет те „и“ пек илтĕнет.

6. Хытă сăмах вĕçĕнђе „и“ çемçе илтĕнет пулсассăн, ђата çав „и“ умĕнхи хупă сасăсем те çемçенĕн илтĕнеççĕ пулсассăн, „ť, љ, њ“ çырмалла: Aњњи, Паљљи, Урњи, Уљка, Унťри, Карљи, Маťни, Љаванťťи, Пуљкки, пуљљи, ваљљи.

Анлантарни. Хытӑ сӑмах вӗҫӗнђе „и“ йаланах хытӑ илтӗнет; „и“ умӗнђи хупӑ сасӑсем те хыттӑн илтӗнеҫҫӗ: ури, алли, атти, анни, урни, палли, пурти, ули. Ҫак пӑравӗлӑри сӑмахсенђе „и“ ҫемҫен илтӗнет, вӑл ун умӗнђе ҫемҫе сасӑсем „т̆, ԓ, н̧“ тӑнинђен килет; „т, л, н“ сасӑсем тӑраҫҫӗ пулсан, „и“ хытӑ илтӗнмелле. Ҫак пӑравӗлӑ пӗр сӑмаха иккӗлле вуламалла тӑвас мар тесен те кирлӗ: ҫак пӑравӗлӑ пулмасан „Анни“ тесе ҫырнӑ сӑмаха „Ан̧н̧и“ тесе те „Анни“ тесе те вулама пулат̆.

7. Калат̆, курат̆, тӑват̆—ҫакӑн пек хытӑ сӑмахсен вӗҫне йаланах „т̆“ ҫыраҫҫӗ.

Анлантарни. Ђӑвашсем ђас—ђасах „халӗ“ тес вырӑнне „хаԓ“ теҫҫӗ. „Калат̆, курат̆“ тес вырӑнне те, сӑмаха тӗплӗрех, астумалларах калас тесен: „калатӗ, куратӗ“ теҫҫӗ.

„Хаԓ“ сӑмахри „ԓ“—кӗскен каланӑ „лӗ“. Ҫавӑн пекех ытти сӑмахсенђи те „т̆“ кӗскен каланӑ „тӗ“ пулат̆. Хытӑ сӑмах вӗҫӗнђи „лӗ, тӗ, нӗ“ сыпӑксем кӗскелсен йалан „ԓ, т̆, н̧“ сасӑсем пулаҫҫӗ.

8. Каламаст̆, вуламаст̆, выљамаст̆ —çакăн пек хытă сăмахсен вĕçне м а с т̆ çыраççĕ; çӳремест, ӳлемест, ĕçлемест—çакăн пек çĕмçе сăмахсен вĕçне м е с т çыраççĕ

А н л а н т а р н и. „Каламаст̆, вуламаст̆, çӳремест“ сăмахсем „калат̆, вулат̆, çӳрет“ сăмахсенђен „т̆“ йе „т“ умĕн „мас“ йе „мес“ кӳртсе лартнăран пулаççĕ: кала + мас + т̆, вула + мас + т̆, çӳре + мес + т.

Х у ш с а к а л а н и. Ку таранђђен каланă 8 пăравĕлăра епир „т̆, љ, ң, т, л, н“, тата çемçе „ы“ хăçан çырмаллине пĕлтĕмĕр. „Л, н, т, ы“ сасăсем çемçе сасă хăвађĕпе çемçен илтĕнеççĕ пулсан „љ, ң, т̆, и“ çырмалла мар, „л, н, т, ы“ çырмалла.

9. Сăмахра пĕр сасă икĕ сасă вăрăмĕшĕ пек илтĕнсен, икĕ пĕр пек сасă палли çырмалла: иккĕ, вуннă, атти, аншĕ, сарри, анни, ылттăн, кайаттăм, кайăттăм, кайасси, кайсассăн.

10. Сăмаха пĕр йĕртен тепĕр йĕре сыпăкăн куçармалла: пу-лă, ав-тан, йа-па-ла, ху-ра-скер, ла-йăх,-ђĕ, ту-нă-ђђĕ, ка-йăт-тăм, ка-йаç-çĕ.

11. „С“ сасӑ „ç“ сасӑпа йунашар пулсан „ç“ сасӑ пек илтӗнет, „ш“ сасӑпа йунашар пулсан, „ш“ сасӑ пек илтӗнет; çырасса çапах „с“ сас-палли çырмалла: куçсем, хӗçсем, йывӑçсем, куçсӑр, хӗçсӗр, куçса, выçса, пилешсӗр ҫӑрӑшсӑр, кайасшӑн, пӗлесшӗн, курасшӑн.

12. Сӑмах вӗçӗнҫе „ӑ, ӗ“ пулсассӑн, вӗсене çырмасӑр хӑвармалла мар; ӑçтихсенҫе куна çырмасӑр хӑварма йурать: çырмалла: сарӑ аҫа, шурӑ ҫӑхӑ, икӗ ӗне, ватӑ çын.

Ӑнлантарни. Ӑçтихсем илер:
Тимӗр тылӑ ӑшӗнҫе
Шурӑ шуйттан ларать, тет.
Кантӑр тыллас тесенех
Куçа çӳпӗ кӳртет, тет.
Çав çӳп куçа йулсассӑн,
Çын тухатмӑш пулать, тет.
Уйа тухрӑм, ай уй куртӑм.
Ик-сар лаша ай вӑрçаççӗ.

Малтанхи 4 ӑçтихра „тылӑ, шурӑ, çӳпӗ“ сӑмахсене туллипех çырнӑ, ӑçтихсем илемлӗ тухнӑ; кӗскен çырнӑ пулсан, ӑçтихсем илемлӗ тухас çукҫӗ. Йулашки 4 ӑçтихре „çав, çӳп, ик, сар“ сӑмахсене кӗскен çырнӑ, ӑçтихсем илемлӗ тухнӑ; кӗскен çыр-

мин пулсан, ăçтихсем илсмлĕ тухман пулĕ-ҫҫĕç.

13. „Ҫĕ (ҫҫĕ)“ пайа пур сăмахпа та патакпа çыпăçтарса çыраççĕ: есĕ-ҫҫĕ, лаша-ҫҫĕ, вăлах-ҫĕ. çук-ҫĕ, пур-ҫҫĕ. калана-ҫҫĕ, тулман ҫҫĕ, кайĕ-ҫҫĕ, каймĕ-ҫҫĕ, тăват-ҫĕ, курат-ҫĕ, курмаст-ҫĕ, итлемест-ҫĕ, парса-ҫҫĕ, парса-ҫҫĕç, кулат-ҫĕç, пулмаст-ҫĕç.

Анлантарни. „Ҫĕ (ҫҫĕ)“ вăл кĕскелнĕ сăмах. Ăна вырăсла „недостаточный глагол“, теççĕ. Йумах илер. „Пирĕн вăкăр пур; вăл хура, пит вăйлă тата пит усал; никама та иттермест, куракана тĕкет“. Çак йумахах ĕлĕк пулнă пек туса çырар. „Пирĕн вăкăр пур-ҫҫĕ; вăл хура-ҫҫĕ, пит вăйлă-ҫҫĕ, тата пит усал-ҫҫĕ: никама та иттермест-ҫĕ, куракана тĕкет-ҫĕ“. „Пур, хура, вăйлă, усал“ сăмахсене пурте „ҫĕ“ пайпа патакпа çыпăçтарса çыраççĕ. Çавăн пиркийех „иттермест, тĕкет“ сăмахсене те патакпа çыпăçтарса çырас пулат. „Ҫĕ“ пайа ĕлĕкхи вăхăта пĕлтернĕ ҫух патакпа çыпăçтарса çыраççĕ пулсан, ытти вăхăтсене пĕлтернĕ ҫух та çаплах çырас пулат.

14. „И. ши, и-мĕн, а, е, ĕçке, ха“ пайсене сăмах çумне патакпа çыпăçтарса çыраççĕ: есĕ-и, пайан-и, кам-ши, ăçта-ши, тилĕ-и-мĕн, вулатăн-и-мĕн, куратăн-а, кайатăр-а, илтĕн-е, илетĕр-е, аван-ĕçке, пурăнатĕçке, пар-ха, йурĕ-ха.

Хушса калани. Йурăсене, ăçтихсене, илемлетесшĕн хăш сăмаха кĕскен каланă пулсан, „а, е, и“ пайсене сăмахпа çыпăçтарсах çырмалла: „çук-ђĕ-и, пур-ђђĕ-и, илетĕн-е, куратăн-а, сахал-и-мĕн“, вырăнне: „çук-ђи, пур-ђђи, илетне, куратна, сахал-им“ тесе çырма йурать.

15. Йĕкĕр сăмахсене пĕр пĕринпе патакпа çыпăçтарса çырмалла: а) çăкăр-тăвар, ĕçкĕ-çикĕ, ађа-пăђа, йыта-кађăка, хурт-кăпшанкă, йун-кун, хĕр-ађа, хĕр-арăм, пĕр-тăван, пĕрмай, хĕвел-тухăç, ик-виç, утмăл-çитмĕл, хурĕ-мĕнĕ, урлă-пирлĕ, хирехирĕç, кунĕ-кунĕпе, кунĕн-çĕрĕн, куккăр-маккăр, ы) шăвкăр-шăнкăр, вĕлвĕл, çăтăр-çатăр, йăлт-йалт, лăй-лăй, лăй-лай, у) тап-таса, хуп-хура, кăнкăвак, ш) кĕл-ту, сăх-сăх, пулнăпулман, пиçнĕ-пиçмен, курни-кур-

манни, пули-пулми, курни-илтни, ёҫлени-мĕнĕ.

16. Ҫăваш ҫĕлхинҫе сарăлнă вырăс сăмахĕсене ҫăвашла ҫырмалла: Йакку, Аҫтаплан. ăстаккан, сахăр, кĕнеке, ĕрет, салтак, кĕрихвĕл. уҫҫиттĕл, комитет, камиҫҫи, тĕпуттат.

17. Ҫăваш хушшинҫе сарăлайман вырăс йе наукка сăмахесене вырăсла ҫырмалла: философи, Сократ. Александр Македонски, Ази, Юли Цезар, математика, истори, географи, педагогика, литература, синтаксис.

## Йумах палли пăравĕлăсем.

Пăнҫа(.), ыйтмалли палла(?), кăҫкăрмалли палла(!), икĕ пăнҫа(:), нумай пăнҫа(...), вырăс ҫырăвĕнҫе лартнă пекех лартмалла. Хӳре пăнҫа(,) пĕрлешнĕ йумахра (слитное предложение), йышлă йумахра (сложное предл.), ҫĕнекен сасăлă йумахра (предл. с обращением) вырăс ҫырăвĕнҫи пекех лартмалла. Анҫах йышла йумахра тата хăш-хăш урăх ҫĕрте те хӳре пăнҫă йепле лармаллине халĕ пĕтĕмпех пĕлсе ҫитмен-ха. Ҫавăнпа Хӳре-пăнҫа ҫăвашла ҫыракан-

сем пурте пĕр пек лартмаççĕ. Йут сăмахсене те (чужие слова) пурте пĕр пек çырмаççĕ. Хăшĕ вĕсене пысăк сас паллипе çыраççĕ, умĕнђен те, хыçĕнђен те кавыђкă лартаççĕ, хыçĕнђен тата хӳре-пăнђă лартаççĕ. (Атте мана каларĕ: „Атă, ађам, утă пуçтарма“, терĕ). Хăшĕ халĕ калавă пекех çыраççĕ, анђах кавыђкă лартмаççĕ. (Атте мана каларĕ: Атă, ађам, утă пуçтарма, терĕ). Хăшĕ йут сăмаха пĕђĕккĕпе пуçлаççĕ; хыççăн хӳре-пăнђă лартаççĕ, кавыђкă лартмаççĕ. (Атте мана каларĕ: атă, ађам, утă пуçтарма, терĕ)

Йут сăхахсене çырасси çинђен епĕ хам акă мĕн шухăшлатăп. 1) Йут сăмахсен умĕн икĕ гăнђă лартмалла. Кун пирки тавлашакансем çук. 2) Йут сăмахсем хыççăн—„тет, тенĕ, терĕç“... умĕн хӳре-пăнђă лартмалла, Кун пирки те тăвлашакансем çук. 3) Йут сăмаха пысăк сас паллипе пуçламалла, мĕншĕн тесен хăш ђухне йут сăмах хăй статйа пулат: унта темиçе йумах, темиçе пăнђă пулат. Ăстатйана пĕђĕк сас-паллипе вихăçан та пуçламаççĕ. 4) Ђăваш çырăвĕнђе кавыђкă лар-

тасси вырăс çырăвĕнҫен куçнă йăла. Вырăс çырăвĕнҫе кавыҫкă ҫăнахах кирлĕ: йут сăмаха паллă тăвасах пулат. Ҫăваш çырăвĕнҫе йут сăмаха пĕлме унсăрах паллăсем нумай: умĕнҫе икĕ пăнҫă, икĕ пăнҫă хыç-çăн пысăк сас палли; хыçĕнҫе хўре-пăнҫă, хўре-пăнҫă хыççăн „тет, тенĕ, терĕç" йе урăх çавсем пек сăмах. Çапла вара епир ҫăваш çырăвĕнҫе йут сăмаха кавыҫкăсăрах аван пĕлме пултаратпăр. Вырăс çырăвĕнҫе апла мар, унта кавыҫкă кирлĕ. 5) Халĕ вырăссем те кавыҫкă çырма пăрахаççĕ: кĕнекесенҫе, шурналсенҫе, хаçатсенҫе кавыҫкă лартни пит сахал. Вырăссене кавыҫкă кирлĕрех, вĕсем ăна çапах пăрахаççĕ. Пирĕн ҫăвашсен кирлĕ мар палла йышăнмалла-и вара? 6) Кавыҫка йышăнсан, аҫасене ăна шкулта тĕрĕс çырма вĕрентес пулат. Тĕрĕс çырма вĕренме вăхăт та, ҫăту та нумай кирлĕ. Йут сăмаха ҫăваш шкулĕнҫе малтанхи çулах çырмалла пулат; малтанхи çулах аҫасене кавыҫкă çырма вĕрентме йывăр. Кирлĕ мар паллăшăн вăхăт иртерни, асап курни—вăл сийен ĕç. Çапла шухăш-

ласан, йут сӑмаха иккĕмĕшсем каланӑ пек çырмалла тухат: умĕнџе икĕ пӑнџӑ тата мӑн саспалли пуçланӑ сӑмах; хыçĕнџе хŷре-пӑнџӑ; кавыџкӑсем кирлĕ мар. „Џӑвашла тĕрĕс çырма вĕренмелли кĕнекере“ çак паравĕлӑна епĕ халĕ йулашкинџен каланӑ пек турӑм. Н. И. Ашмарин ӑва хирĕç нимĕн те каламарĕ.

Хапӑс, Утӑ уйӑхĕн 10-мĕш
кунĕ, 1918-мĕш çул.

Феодор Тимофеев.

Хакĕ 30 пус.